**Интернет конкурсăн ыйтăвĕсемпе хуравĕсем**

ИК-2020. Ыйтусем

1. «Катăк уйăх» тесе мĕнле уйăха калаççĕ?

2. Çак йĕресене кам çырнă? Авторне туллин кăтартăр.

*Халăх, халăх тенĕрен*

*Хал çĕкленчĕ çĕнĕрен.*

3. *Уяв* пĕрремĕшле сăмах-и е иккĕмĕшле-и? Ĕнентерĕр.

4. Шупашкар хулин пĕрремĕш тата хальхи гербне хăш çулсенче туса çирĕплетнĕ?

5. Этем ĕмĕрне миçе тапхăра пайлаççĕ? Тапхăрĕсене кăтартăр.

6. Чăваш кĕнеке издательствин логотипĕн авторĕ кам? Вăл тата мĕнле ĕçсемпе палăрнă?

7. Константин Иванован «Тимĕр тылă» литература юмахĕнче миçе сăнар?

8. Уйăхпа хĕвел хăçан пўрте кĕреççĕ?

9. Вырăссем *Чувашской автономии 100 лет* тенине чăвашла епле каламалла?

10. Шупашкарта троллейбуспа Вĕренў институчĕ патне çитсе чарăнсан чăвашла: «Чарăну «Вĕренў институчĕ!» – тесе пĕлтереççĕ. Пĕлтерўре каланă йăнăша тўрлетĕр.

11. Мĕнле местоимени тепĕр майлă вуласан хĕрхенў сăмахĕ пулать?

12. *1, 2, 11, 200* хисеп ячĕсене валеçў форминче çырăр. Хăш хисеп ятĕнчен валеçў форми икĕ тĕрлĕ пулать? Икĕ формине те çырса парăр.

13. Чăваш ен миçемĕш çулта тата мĕнле çитĕнўсемшĕн Ленин орденне тивĕçнĕ?

14. Точкăсем вырăнне *вăрçă* сăмаха лартăр.

*Игнатьевсен çемйи …… пилĕк ывăлне ăсатнă.*

15. Йăнăша тўрлетĕр.

*Тĕрлĕ вак-тĕвек ĕçе пурнăçланă чухне пирĕн сĕнĕве шута илĕр.*

16. Тĕрĕс вариантне тупса çырăр:

Вĕренў чĕлхине е чĕлхисене **(вĕренў организацийĕ, район (хула) шайĕнчи вĕренў пайĕ, вĕренў министерстви)** нормативлă актсемпе çирĕплетет.

17. Тĕрĕс вариантне тупса çырăр:

Вĕренў чĕлхисене тата хăш-хăш чĕлхесене ачасене вĕрентессине **(ашшĕ-амăшĕ, вĕрентекен, вĕренў организацийĕ, район (хула) шайĕнчи вĕренў пайĕ, вĕренў министерстви)** ыйтнипе палăртаççĕ.

18. Тĕрĕс мар вариантне тупса çырăр:

Ятарлă ыйтăва (заявление) ача **(шкулчченхи вĕренў организацийĕсенче çўреме пуçланă чух, пуçламăш пĕтĕмĕшле вĕренў программипе, пĕтĕмĕшле тĕп вĕренў программипе, пĕтĕмĕшле вăтам вĕренў программипе** вĕренме пуçласан **е урăх вĕренў организацийĕсене куçнă чух)** çыраççĕ.

19.Тĕрĕс вариантне тупса çырăр:

Вĕренў кĕнекисен списокне **(вĕрентекен, вĕренў организацийĕ, район (хула) шайĕнчи вĕренў пайĕ, регион вĕренў министерстви)** палăртать.

20. Туркка чĕлхинчи *"deve, fil, kaz, inek, at"* сăмахсем чăваш чĕлхинче мĕнле пулнине çырăр.

ИК-2020. Хуравсем

1. Февраль (нарăс)

2. П.П. Хусанкай.

3. Иккĕмĕшле. *Уя* глагол çумне *-в* аффикс хушăннипе пулнă.

4.1781, 1969, 1998.

5. 4 (ачалăх, яшлăх, арлăх, ватлăх).

6. Элли Михайлович Юрьев, ЧР гербĕпе ялавĕн тата Шупашкар хулин гербĕн авторĕ.

7. 13 сăнарпа персонаж.

8. Хĕрпе ывăл çуралсан.

9. Чăваш Автономийĕ 100 çул тултарнă е Чăваш Автономине тунăранпа 100 çул çитрĕ.

10. «Вĕренӳ институчĕ!» чарăну.

11. Леш – шел.

12. . Пĕрер, икшер, вун пĕршер, ик çĕршер (икшер çĕр).

13. 1935 çулта çул-йĕр строительстви енĕпе тунă çитĕнӳсемшĕн.

14. Вăрçа.

15.Тĕрлĕ вак-тĕвек **ĕçе тунă** чухне пирĕн сĕнĕве шута илĕр.

16. Вĕренӳ чĕлхине е чĕлхисене **вĕренӳ организацийĕ** нормативлă актсемпе çирĕплетет.

17. Вĕренӳ чĕлхисене тата хăш-хăш чĕлхесене ачасене вĕрентессине **ашшĕ-амăшĕ** ыйтнипе палăртаççĕ.

18. Ятарлă ыйтăва (заявление) ача **пĕтĕмĕшле вăтам вĕренӳ программипе** вĕренме пуçласан çыраççĕ.

19. Вĕренӳ кĕнекисен списокне **вĕренӳ организацийĕ** палăртать.

20. Тĕве, слон, хур, ĕне, ут.